# ВĂХĂТА ХАКЛАМАЛЛА, ÇЫНСЕМШĔН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

кех пациента хăйне кӳнĕ медицина пулăшăвĕн пахалăхĕпе тата калăпăшĕпе туллин паллашма май туса памалла. Медицина ĕçченĕсен професси яваплăхĕпе тата пациентсен ирĕкĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе Раççейре пирĕн чи лайăххисем пулма май пур. Сирĕнпе пĕрле эпир çакна тума пултаратпăр тата тума тивĕç!

Вĕрентӳ тытăмĕнче экономика механизмне çĕнĕлле йĕркеленин принципĕсем 2001 çултанпах ĕçе кĕрсе пынине палăртса хăваратăп. Вĕрентӳ учрежденийĕсен çын пуçне шутланă укçа-тенкĕн норми, экономикăри хăй тĕллĕнлĕхĕ шăпах пирĕн пĕтĕмĕшле йĕркене – юлашки кăтарту тăрăх укçа-тенкĕ уйăрассине тивĕçтерет. Халĕ тепĕр утăм тумалла - çав принципсене педагогсен ĕçне тӳлесси çине куçармалла. Çитес 2-3 çулта ку кăтарту пĕрре çурăран пуçласа 2 хут таран ӳсмелле. Министрсен Кабинечĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен халех, учрежденисен сечĕсемпе штачĕсене инвентаризаци ирттерсе, вĕрентекенсен ĕç кăтартăвĕн индикаторĕсене кĕртмелле. Чи лайăх учительсем пысăк ĕç укçи илме тивĕç, япăх вĕрентекенсенчен вара шкулăн хăтăлмалла.

Иртнĕ эрнере Раççей Президенчĕ пирĕн пурăнмалли çурт-йĕр строительствин, уйрăмах çамрăксем валли çурт-йĕр тăвассин опычĕпе тĕплĕн интересленчĕ. Чăннипех те, 2002 çулти 6 çемьерен пуçланса кайнă çамрăксен ипотеки тулли хула халăхĕ чухлĕ аталанса çитрĕ теме пулать – 8 пин çамрăк çемье пурăнмалли çурт-йĕр туянас енĕпе патшалăх пулăшăвне илнĕ. Паян федераци правительстви ку енĕпе чăваш опычĕ çĕршыври чи лайăххи пулнине йышăнать.

Хула строительствинче ыйтăва пайăррăн татса парассинчен тытăмли çине куçрăмăр – çуртсем мар, хальхи социаллă тата инженери инфратытăмĕллĕ тулли микрорайонсем тумалла. Çĕнĕ Шупашкарти «венгр кварталĕ» ку енĕпе пĕрремĕш чĕкеç пулса тăчĕ.

Халĕ Шупашкар хулин кăнтăр-хĕвел анăç пайĕнче «Б. Хмельницкий районĕпе тата ыттинче», унччен юхăннă лаптăксен территорийĕнче, çавăн пекех кивĕ тата çĕрĕшнĕ çуртсен вырăнĕнче пурăнакан тĕп хулари 100 пин çын валли 2 миллион тăваткал метр çурт-йĕр хăпартмалла. Кунти микрорайонсенче 13 пин ача вырнаçмалăх ача сачĕсемпе шкулсем, Трусиха тата Сугутка шывĕсен йăлăмĕнче парк зонисем, çавăн пекех Шупашкарăн çĕнĕ кăнтăр тата çурçĕр-хĕвел анăç районĕсене пĕрлештерекен çĕнĕ автомагистраль пулаççĕ. Эпир ку ĕçсене пуçларăмăр та ĕнтĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр хакĕ сахал тупăшлă халăх ушкăнĕшĕн тата çамрăк çемьесемшĕн туянма юрăхлă пултăр тесе тĕллев лартнă.

Министрсен Кабинечĕпе «Внешторбанк» АУО пĕрлехи вăйпа Шупашкар районĕнчи уçă хирте «Çĕнĕ хула» проекта ĕçе кĕртме пуçланă, вăл пурăнмалли çурт-йĕрĕн калăпăшне 1 миллион тăваткал метр лаптăкпа палăртать. Сахал хутлă тата уйрăм çын çурчĕсем Атăл юхан шывĕн экологи енчен таса, илемлĕ вырăнĕнче пулĕç. Унти симĕс газонсем, çуран çӳремелли зонăсем, тӳп-тӳрĕ те тикĕс çулсем тата нимĕç проектçисем туса хатĕрлекен архитектура формисем çав пурăнмалли çурт-йĕр массивне калама çук хитре те илĕртӳллĕ тăваççĕ. Проектра хальхи технологи çĕнĕлĕхĕсемпе анлăн усă курнă, çав шутрах комплекслă строительствăн хăвăртлатнă мелĕпе те. Çĕкленекен çурт-йĕр тĕрлĕ, çав шутра çăмăллăхлă кредит тата сутмалли тытăм урлă çемьесемшĕн туянма юрăхлă пулмалла. Çавнашкал проектсем çывăх вăхăтрах Чăваш Енĕн кашни районĕпе хулинчех хута каймалла.

Аслă тĕллевсемсĕр аслă çитĕнӳсем пулаймаççĕ, çавăнпа та республика Раççейшĕн кăна мар, тĕнчешĕн те çивĕчленсе пыракан граждансене паха шывпа тивĕçтерес вышкайсăр пысăк проблемăна татса парас енĕпе хастар ĕçлет, мĕншĕн тесен унран наци сывлăхĕ те килет. Часах эпир Чăваш Енĕн кăнтăр тата тĕп районĕсенче пурăнакан çĕршер пин çын валли тăвакан шыв хранилищисен миллиардшар тенкĕлĕх стройкине вĕçлетпĕр. Чăваш Ен влаçĕсем халăха таса шывпа тивĕçтерме халиччен нихăçан та çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрман. Специалистсем палăртнă тăрăх, чирсен 80 процентчĕ ĕçмелли шыв пахалăхĕ япăххипе çыхăннă, чăннипех те, кунта калаçу халăхăн хальхи сывлăхĕпе пурнăç тăршшĕ пирки кăна мар, тулли этнос шăпи пирки пырать. Çĕр çинче пурăнакан çынсем нефтьпе газ çитменрен мар, ĕçмелли шыв çитменрен тата хăйсем кăларакан йышлă çӳп-çапран вилме пултараççĕ. Çак чăнлăх влаçсем йышăнакан решенисен никĕсĕнче çеç мар, Чăваш Енре пурăнакан кашни çын ĕçĕ-хĕлĕн тата тавра курăмĕн никĕсĕнче те выртмалла.

Питĕ кĕске вăхăтра, тĕрĕсрех икĕ çул хушшинче, пирĕн Раççей пурнăçĕнчи сайра тĕл пулакан проекта ĕçе кĕртме тивет – республикăри халăх пурăнакан пĕтĕм вырăна асфальтлă çулпа çыхăнтармалла. Ку тĕллеве пурнăça кĕртме 9,0 млрд. тенке яхăн уйăратпăр. Анчах çакă пĕтĕм ĕç мар-ха. Министрсен Кабинечĕ умне хушма тĕллев лартатăп: пĕтĕм çулсен тĕрев сетьне тата кĕперсене юсаса çĕнетмелле. Вĕсен тĕп пайĕ, иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче тунăскер, хăвăрт ӳссе пыракан автотранспорт нагрузкипе шайлашăнса модернизаци иртмен.

Эпир халичченхи çулсенче те çулсем хывнă, пĕлтĕр кăна сирĕнпе пĕрле бюджета 700 млн. тенкĕ хушрăмăр тата халăх пурăнакан 32 вырăна асфальт сарнă çулпа çыхăнтартăмăр. «Газпром» программи асра та пулман чухне газ кĕртес ыйтăва хамăр тĕллĕн мĕнле ăнăçлă татса патăмăр – ку ыйтăва та çавăн пекех татса парас пулать. Мĕншĕн тесен лайăх çулсем – экономикăн “юн тымарĕсем” кăна мар, хамăрăн халăха чунран хисепленине кăтартакан паллă та. Мĕншĕн тесен транспорт инфратытăмĕн лару-тăрăвĕ наци сывлăхне те, культурăна сыхласа хăварассипе малалла аталантарасси çине те витĕм кӳрет.

Иккĕмĕш тĕллев çинчен. Никĕсе хунă инновацилĕх ĕçĕ Чăваш Еншĕн хăтăлса юлмалли мар, малалла ăнăçлăн аталанма пулăшакан мелсенчен пĕри пулчĕ. Эпир, ахăртнех, чи кирлинчен пуçларăмăр: çыннăн ăстăнне улăштарма палăртрăмăр, чи малтанах - çĕнĕ тĕллевсем лартса тата кивĕ проблемăсене çĕнĕ технологисемпе татса памалли майсем тупса. Чăваш предприятийĕсен чи лайăх ертӳçисем производствăна аталантарса пырса çĕнĕлле шутлама пуçларĕç. Тĕпрен илсен, шăпах çавна пула пирĕн промышленность производствин ӳсĕмĕ Раççейри вăтам шайран çӳлерех çĕкленчĕ. Инновациллĕ экономика рельси çине куçни республикăна тулашри тавар çаврăнăшне пĕр вĕçĕмсĕр ӳстерсе пырассине кăна тивĕçтермерĕ. Чăваш Енри тулашри тавар çаврăнăшĕн сальди тĕпрен улшăнни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Эпир ĕçлеме пуçланă çулсенче вăл çуклă сальдăпа «-5,1 миллион АПШ долларĕ чухлĕ» пулнă пулсан, 2006 çул тĕлне 77,5 миллион АПШ долларĕ чухлĕ пурлă сальдăна тухрăмăр. Çакă республикăна килсе кĕрекен ют çĕршыв укçи шучĕ кунтан тухакан укçа-тенкĕрен ытларах пулнине кăтартать. Çакă татах та пĕлтерĕшлĕрех: Раççейпе танлаштарсан, Чăваш Ен ку кăтартусем патне энергетика чĕр таварĕн ресурсĕсене экспорта ярса мар, тирпейлекен отрасльсен таварĕсене сутса çитрĕ. Çакнах экспорт структури те çирĕплетет. 2006 çулта экспорт шайĕн тĕп пайне машинăсем тăвакан отрасль кăларакан продукци «58,2 процент» тата хими производстви «28,5 процент» йĕркеленĕ. Пирĕн Раççей те çак тĕслĕхпе аталанмалла пек!

Чăваш Енре инновациллĕ аталану валли нормативлă право анине йĕркеленĕ, стратегиллĕ документсенче малашлăхлă çул-йĕрсене палăртнă. Инновациллĕ инфратытăма аталантарас тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕç пырать: венчур фончĕсем, мини-технопарксем, бизнес-инкубаторсем, технологи центрĕсем йĕркеленеççĕ. Паян Чăваш Енре пĕтĕмĕшле хакĕпе 22 миллиард тенкĕ ытла тăракан çĕр ытла инвестици проекчĕ пурнăçланать. Уйрăмах пысăк технологиллĕ обьектсене палăртатăп: Раççейшĕн те, Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕшĕн те сайра шутланакан Канаш хулинчи 2 миллиард тенкĕ инвестици хывăнакан тата çулталăкне 10 миллиард тенкĕлĕх продукци кăларма палăртакан вакунсем тăвакан завод строительствине «вăл пĕтĕм хулан промышленность производствин калăпăшне 2010 çул тĕлне 4 хутчен ӳстерме май парать» тата Çĕмĕрле районĕнчи выльăх апачĕн биологиллĕ активлă хутăшĕсем кăларакан завода. Унăн строительствине 600 миллион тенкĕ инвестици хывăнать, вăл çулталăкне 2 миллиард тенкĕлĕх тавар кăларма палăртать, çакă республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерме пулăшма тивĕç. Инновациллĕх çак вунă çуллăхăн вĕçĕ тĕлне менеджментшăн кăна мар, Чăваш Енре пурăнакан кашни çыншăн, унта шкул çулĕнчи ачасем те кĕреççĕ, пурнăç стилĕ пулса тăмалла тесе шутлатăп.

Виççĕмĕш тĕллев çинчен. Коррупцие пуçĕпех пĕтересси тата патшалăхăн пĕтĕмĕшле тухăçлăхне ӳстересси – пирĕншĕн çĕнĕ кампани мар, ĕç юхăмĕн тата управлени ĕçĕн хăнăхнă йĕрки. Мĕншĕн тесен тухăçлă ĕçлекен патшалăх никĕсĕн никĕсĕ - унăн институчĕсен уççăнлăхĕ, витĕр курăнни. Раççей правительствин общество финансĕсене реформăлассипе çыхăннă пилот программине хăюллăн кĕнине пула Чăваш Ен паян Раççейри регионсем хушшинче официаллă йĕркепе йышăннă «РФ Правительствин тата Пĕтĕм тĕнчери банкăн АПШ 7 миллион та 300 пин долларĕ чухлĕ премипе пĕрле» чи уçăмлă тытăмлă бюджетлă республика пулнипе паллă. Çакă, паллах, республикăн инвестици илĕртӳлĕхне лайăхлатать, унпа пĕрлех çапла майпа вăл финанс тытăмĕн шал енчи коррупцине çуратакан сăлтавĕсемпе кĕрешет.

Пĕлтĕр Раççей Федерацийĕнчи административлă реформăсен концепцийĕн шайĕнче Экономикăн аслă шкулĕ тата Патшалăхпа муниципалитет управленийĕн институчĕ регионсенчи управленин 2005 çулхи пахалăхне хакларĕç. Ростов облаçĕпе пĕрле Чăваш Ен пĕтĕм кăтартăвăн интеграллă индексĕпе малтисен ретне тухрĕ, çав шутрах – кăтартуллă управлени енĕпе, ĕçе шалтан йĕркеленин пахалăхĕпе, лайăх кăтартушăн ĕçленипе тата граждансемпе çыхăну тытас енĕпе. Мускав влаçĕ ку тĕлĕшпе 31-мĕш, Санкт-Петербург - 77-мĕш вырăнта тăраççĕ.

Коррупцие мĕн пулăшать? Патшалăх тата муниципалитет управленийĕнчи ĕç уçăмлă пулманни, ăна регламентламанни. Коррупципе сĕрни «взятка» илнин тĕслĕхĕсене тупса палăртас ĕçре шалти ĕçсен министерствин тата прокуратурăн ятарлă службисем çине кăна мар, йĕркеленекен гражданла общество, общество пĕрлешĕвĕсен представителĕсем пулăшасса та шанатăп. Коррупцие сутăннă çынсен урăх вырăнта లармалла. Эпĕ хам та тĕрлĕ тӳресем «аслă шайрисем те, пĕчĕкреххисем те» хăйсен пайтипе çыхăннă ыйтусене республика Президенчĕн ячĕпе витĕнсе татса пама хăтланнă тĕслĕхсемпе тĕл пулкалатăп. Çав шурлăха путнă тӳрешĕн ертсе пыракан тытăмра вырăн пулмалла мар!

III

«Тырă пулмасан – пĕр çул хуйхă, ывăл-хĕр ăнмасан - ĕмĕрлĕх хуйхă» – теççĕ чăвашсем. Юпа уйăхĕн вун улттăмĕшĕнче, Амăшĕпе ачалăха сыхлакан центр территорийĕнче вырнаçнă Турă Амăшĕн Таса Феодора Турăшĕ ячĕпе уçнă «вăл çемье телейне, ача çуратассине тата воспитани парассине хӳтĕлет, ун умĕнче пулас ача амăшĕсем ача çуратнă чухне пулăшма ыйтса кĕл тăваççĕ» часавая светит тăвассипе çыхăннă церемоние хутшăннă май, 2007 çула Ача çулĕ тесе палăртма сĕнтĕм. Мĕншĕн тесен çĕр çинчи пурнăçра аннесемпе ачасемшĕн тăрăшнинчен таса ĕç урăх çук. Енчен те ачасем ӳстерместпĕр, вĕсен чунĕсемпе сывлăхне сыхласа хăвараймастпăр, пурнăçне çутăрах, ăсхакăл енчен пуянрах тăваймастпăр, вĕсене алă тăсса параймастпăр пулсан, - пирĕн тивĕçлĕ малашлăх пулмасть.

Çавна май çулталăк девизĕ республикăра пурăнакан кашни çыншăнах социаллă пĕлтерĕшлĕ, актуаллă. Çавăнпа та, паллă каларăшри «çиччĕн пăхакан ача куççăр юлнă» тенешкел пулса ан тухтăр тесен, Ача çулĕн программине «ведомствăсенче» кăна йĕркелесе пурнăça кĕртмелле мар, ăна пĕтĕм республикипе, чăваш халăхĕн «ниме» мелĕпе пурнăçламалла.

«Чăваш Ен ачисем» республика программин шайĕнче те, «Раççей ачисем» федераци программин шайĕнче те палăртнă ачалăха сыхламалли нумай ырă ĕç пурнăça кĕрет те ĕнтĕ. Уйрăмах сывлăх сыхлавĕн, вĕрентĕвĕн, культурăн, социаллă пурнăçăн сферисенче. Паян вĕсем мĕнлерех пурнăça кĕрсе пыни çинче чарăнса тăмастăп, мĕншĕн тесен эпир кун пирки Министрсен Кабинечĕн, Патшалăх Канашĕн ларăвĕсенче, Раççей Правительствинче, Патшалăх Думинче тата Федераци Канашĕнче пĕр хутчен мар калаçнă, çавăнпа та, эпир хушнипе – Ача çулĕнче çав тĕллевлĕ программăсен усăллă ĕç коэффициенчĕн кăтартăвне профильлĕ министерствăсем депутатсем тата общественность хутшăннипе тĕплĕн тишкерсе тухса хак парĕç. Тата, кирлех пулсан, ведомствăсем хăйсем çак «пуянлăха тепĕр хут хак парĕç». Паян эпĕ, тĕпрен илсен, ачасен хальлĕхе татса паман проблемисене тата “вырăнтан тапранаймасăр тăракан” ыйтусене палăртса хăварасшăн. Пĕтĕмлетсе каласан, ачалăхăн пурнăç тата опыт кăтартакан «ыратакан вырăнĕсем» çинче чарăнса тăрасшăн.

Ачасем – кирек мĕнле çемьен те абстрактлă пуласлăхĕ кăна мар. Ку вăл кирек хăш патшалăхшăн та геополитика анлăхĕнчи чăн стратегиллĕ ресурс. Мĕншĕн тесен граждансемсĕр патшалăх пулмасть. Çакă паллă: «ăнăçлă пурăнакан» Европа çĕршывĕсенче те халăх шучĕ çирĕппĕн чакса пырать. Социаллă хӳтлĕх шайĕ пысăк пулнине пăхмасăрах фрацуз тата швед, нимĕç тата бельги хĕрарăмĕсем сахалрах та сахалрах ача çуратаççĕ. Унтан, Хĕвел Анăçĕнчен, Раççее тата «чайлдфри» текен юхăм – хăвăн киленĕвӳшĕн, ача çуратмасăр пурăнасси - куçса килчĕ.

Çавăнпа та Раççей политикĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсем пирĕн çĕршывра хĕрарăмсене ача çуратма социаллă пурнăçпа экономика условийĕсем чăрмантараççĕ текен шухăшпа килĕшмесен те пулать. Раççейри ачасем çуралассин чи пысăк кăтартăвĕ ĕçе юрăхлă халăх хушшинче ĕççĕрлĕх шайĕ 80 процента çитнĕ Дагестанра, Ингушетире, Чечняра пулни те çав шухăша хирĕçлет. Тĕнчере ача çуратассипе малта пыракан тата та чухăнрах Африка тата Ази çĕршывĕсене аса илмесен те юрать. Сирĕнпе пирĕн асаннесемпе асаттесем те паянхинчен чылай йывăртарах лару-тăрура ачасем çуратнă! Вĕсем, ман шутпа, пĕр-пĕрне урăхларах юратнă, хăйсен этем миссине те урăхларах ăнланнă. Шăпах вĕсен пурнăçĕпе опытне тĕпе хурса çакна каламасăр пултараймастăп: ман шутпа, ача çуратассине ӳстерессине çапла хистесе пирĕн ăс-тăна кĕртме хăтланни «зомбиленĕ шайра» çĕршывшăн тата унăн халăхĕсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Чăннипе вара пирĕн Раççей цивилизацийĕн тĕп тата никĕсри ыйтăвĕ – ача сахал çурални тата ăна пурлăхпа хавхалантарасси мар, халь çуралнисен тата пурăнакансен чунĕсене, ăс-хакăлпа ӳт-пӳ сывлăхне çăлса хăварасси. Пирĕншĕн çакă пĕлтерĕшлĕрех. Çавна май Чăваш Енри пĕтĕм влаçăн, общество институчĕсемпе çынсен, çавăн пекех пĕтĕм Раççейĕн те тĕп тĕллевĕ - халь пурăнакансене пурнăç пĕлтерĕшне, телейпе килĕшӳлĕхе тупма пулăшасси пулса тăрать. Пирĕн мăн асаттесем:«Чун пулсан чул хушшинче те усрăпăр», - тенĕ. Тав Турра, çак ваттисен сăмахне асра тытса тата пăхăнса пурăнакан çынсем пур.

Çавна май Шупашкарта 1989 çултах çемье ача çурчĕ йĕркеленĕ Анна Викторовнăпа Александр Васильевич Суворовсене тепĕр хут аса илмесĕр пултараймастăп. Хăйсен виçĕ ачисĕр пуçне вĕсем тата 10 ача илсе воспитани парса ӳстернĕ, паян вĕсем пурте ӳссе çитĕннĕ, хăйсен тĕллĕн пурăнаççĕ. Нумаях пулмасть вара туслă мăшăр тата 10 пĕчĕк ачана усрава илнĕ! Паллах, унашкал çынсемшĕн тĕп награда - орденсемпе медальсем мар, хăйсем çемьере пурăнма, хăйсен пулас çемйисене юратма телей пиллесе пăхса çитĕнтернĕ ачисен юратăвĕ вĕрентни. Апла пулин те ăш пиллĕ мăшăр чăвашсен чи пысăк наградине – «Республика умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» ордена - тивĕçлĕ тесе шутлатăп.

Тăхăр ача пăхса ӳстерекен Шупашкарти Захаровсен, Куславкка районĕнчи Шăнчас ялĕнчи Хмельниковсен, Улатăр районĕнчи Кире поселокĕнчи Арефьевсен çемйисем, тăвăрлăхра пулсан та, кӳренӳсĕр, савăнăçлă пурăнаççĕ тесе шутлатăп!

«Çулталăк çемйи» конкурсра тата этем чунĕн мĕнле кăна пуянлăхне курмастăн! Йĕпреç районĕнчи Тарасовсемпе вĕсен сакăр ачи, Канашри Федоровсемпе вĕсен ултă ачи, Красноармейски районĕнчи пилĕк ачаллă Борисовсемпе Çĕнĕ Шупашкарти çавăн чухлех ачаллă Васильевсем унта çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Акă вăл ашшĕсемпе ачисен ырă тĕслĕхĕ - илемпе гармонин тĕслĕхĕ. Ун пек конкурссене пирĕн наци уявĕсене çавăрмалла, вĕсем пулăшнипе çемье хутшăнăвĕсен культурине йĕркелемелле, уйрăмах – çамрăк çынсен тăнĕнче.

Пурнăç тăршшĕн кăтартăвĕ, вăл республикăра юлашки виçĕ çулта çур çула çити ӳссе 66,4 кăтартăва çитнĕ - эпир ку тĕлĕшпе федерацин Атăлçи округĕнче 3-мĕш, Раççейре 17-мĕш вырăнта тăратпăр - çакă пире тивĕçтерме пултараймасть. Эпир хальлĕхе 67,2 кăтартăва çитме тĕллев лартатпăр. Çапах та паян акă мĕн пăшăрхантарать: Раççей арçынĕсем 40-50 çулта вилеççĕ, вĕсенчен çурри ытла пенси çулне çитмесĕрех пурнăçран уйрăлать. Тен, вĕсем ачисемпе савăнса пурăнма пĕлменрен вилеççĕ? Тен, вĕсен хăйсем пурнăç панă чунсемшĕн яваплă пулнине туйма хистекен хавхалану çук? Тен вĕсен йышлă мăнукĕсен тата мăнукĕсен ачисен çитĕнĕвĕсене курса савăнма чун хистевĕ çук? Е вĕсене ăс-тăн пуянлăхне, гражданла опытне пама кăмăлĕ çук? Пурнăça юратса йышăнасчĕ, пĕрех хутчен!

Паллах, Ача çулталăкĕн тĕллевĕ моральпе этика ыйтăвĕсен хуравне шыраси шутланмасть, анчах та пирĕн обществăн вĕсене хуравлама тиветех.

Ялти демографи проблемисенчи социаллă пурнăçпа экономика сăлтавĕсен пĕлтерĕшне те пысăклатма кирлĕ мар. Хам та йышлă çемьере, çут çанталăк газĕ, шыв пăрăхĕсемпе лайăх çулсем пулман ялта çуралса ӳснĕрен, асăннă сăлтавсене чунпа ӳт-пӳ кахаллăхне тӳрре кăларма хăтланни кăна тесе шутлатăп. Паян ялсенче чăваш влаçĕ пирĕн атте-аннесене кăна мар, пире те тĕлĕкре курма пултарайман майсем туса парать. Эпир ял ĕçченĕсене пурăнма хăтлă пултăр тесе çут çанталăк газĕ кĕртсе патăмăр, çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр тунă чухне çĕршер миллион тенкĕлĕх пулăшу кӳретпĕр. Хальхи вăхăтри шкулсем хăпартни, тĕслĕх библиотекăсем уçни тата вĕсене кирлĕ хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтерни, ял ачисемшĕн тăрăшни – хресчен амăшĕсемшĕн тăрăшнин тăсăмĕ.

Агропромышленность комплексĕнче наци проектне ĕçе кĕртме тытăннă хыççăн уйрăмах вăйланнă кредит политики хресчен çемйине япăх мар ĕçлесе илме май парать, апла пулсан – çемьен экономика никĕсне çирĕплетме пулăшать.

Шел те, паян Раççейре 2002 çулхи халăх çыравĕн пĕтĕмлетĕвĕсемсĕр пуçне çемьесен йышĕпе тата тытăмĕпе паллаштаракан статистика никĕсĕ çук. Унта вара çĕнĕ йĕркесемпе килĕшӳллĕн çемьесене мар, уйрăм çынсен кил-çурт хуçалăхне шута илеççĕ. Эпир федераци тытăмне, Раççей статистикине, кăтарту пама пултараймастпăр, анчах Ача çулталăкĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Чăваш Енре хамăрăн ачаллă çемьесен электрон базине йĕркелеме тивĕç. Республикăра юлашки çулсенче туса ирттернĕ компьютеризаципе информатизацин çӳллĕ шайĕ пире çак ĕçе хăвăрт та пысăк ăсталăхпа тума май парать.

Влаçпа обществăна тата тепĕр проблема çинчен аса илтермесĕр хăварма юрамасть. Юлашки пилĕк çулта абортсемпе ача çуратассин шайлашăвĕ икĕ хут лайăхланчĕ, абортсен шучĕ вара икĕ хут чакрĕ пулсан та,